Хветěр АГИВЕР

# КĚРЛЕКЕН ПУШАР, Е ВИКТОР РЗАЙĂН ЫРАНХИ КУНĚ

Виктор Рзай пурăннă пулсан, синкерсĕр пулнă пулĕччĕ-ши унăн паянхи пурнăçĕ? Темĕн, пĕртте ĕненес килмест. Сталин самани вăхăтĕнчи пек элеклесе тĕрмене ярса çĕртмеççĕ пулин те, пултаруллă çын шăпи халĕ те çавçавах «хĕн-хур айĕнче-ха». Пултарусăртараххисем, чап çилхине чи малтан ярса илнисем, пултаруллăраххисене ушкăнланса сăрса илесси паян та пĕтмен-ха. Халĕ та ăста çыравçă, тертлĕ çитĕнекен юман пек, кăра вĕрекен вичкĕн çилсенчи пĕччен хӳтĕленет.

Петĕр Хусанкайсем, Митта Ваçлейĕсем тӳснĕ пулин те, Виктор Ефремович Рзай çав чĕтреттерекен çиле чăтса ирттереймен. Пуç ярса çĕртмен ăна, хупса та лартман, критика чукмарĕпе кӳпкесе çырма çеç пăрахтарнă, юратнă ĕçĕнчен пистернĕ. Литература хутлăхĕнче ку яханта чĕвĕлтетекен çыравçăсене çакă тĕлĕнмелле те пулĕ, пуртех вĕсем ку синкер мĕн иккенне ăнкараймаççĕ те пулĕ. Ун чухне вара идеологи чукмарĕ сулăнса кайсан сывлаймиех тунă. Тăван литературăн чĕрĕлĕхĕпе сывлакан анине çĕнĕ хавхаланупа пырса кĕнĕскерĕн çав усал критикăна пула палт! тӳнсе каймалла пулса тухнă унăн. Çырсан пичетлемеççĕ, «кулаксен чан çапаканĕ» киллетсĕр ята илтнĕ хыççăн ун тĕлне пичетленмелли алăксем шалт хупăнаççĕ. Халĕ вăл вăхăтри пăтăрмахсем кăшт кулăшла та: ни пурнăçĕпе, ни çырнипе ăна ниепле те «кулаксен чанне çапакан» теме май килмен. Хайлавĕсем унăн пĕтĕмпе тенĕ пекех çĕнĕ саманана юравлăскерсем. Хайĕн пурнăçĕ тесен вара... Сумлă кил-йышра çуралнă пулин те ашшĕн ытлă-çитлĕ çулĕпе каймасть хĕрӳ чĕрелле Виктор; икĕ сыпăклă шкула пĕтерсен вăл ялти çамрăксен ячейкин секретарĕ пулса ĕçлет, Шупашкарти совпартшкула вĕренме каять, ун хыççăн Кавалти вулав çуртĕнче вăй хурать, тăван ялĕнче хĕрлĕ улахсем йĕркелес тесе хытă тăрăшать. Виктор Рзай ашшĕпе ячĕшĕн мар, чăнласах урлă пулать. Виталий Станьял калашле, кулак вăхăчĕ çитичченех, НЭП янкăсланнă çулсенчех ывăлĕ урăх «çуна çине» ларать. Ун чухне колхозсем тăвасси инçе пулнă-ха, кулак сăмах та пичете лекеймен...

Виктор ашшĕн, Ехрем Захарович Исаевăн, ялта икĕ хутлă çурт, йĕри-тавра хуралтă пулнă. Картишĕнче тарасаллă пысăк çăл – таврари чейçĕсене ăмсанмалăх! Чĕр кĕмĕл пек шывлă. Çăлĕ халĕ те пур. Уçă та сиплĕ, тăп-тăрă та шăнкăр-шăнкăр: Виктор Рзайăн якатнă калавĕсенчи çыпăçуллă пуплевĕ пекех!

Виктор ашшĕ НЭП вăхăтĕнче чей лаçĕ, шушкă-перемĕк лавкки тытса тăнă, ывăлĕнчен вăл Кавал пасарĕнчи суту-илӳ ĕçне хăй пекех савакан çын тăвасшăн çуннă. Ывăлĕ ашшĕ йĕрĕпе каясшăн пулманран Ехрем Захарович ăна хăваласа янă, лешĕ ашшĕнчен сивĕннĕ.

Апла пулин те кулак чанне çапма та шухăшламан Рзай пуçĕ çине идеологин анратса ямалли йывăр чукмарĕ йăтăнса анать. Писательсен союзĕн

членне илнӗскере, ӑна ҫыравҫӑсен йышӗнчен кӑлараҫҫӗ, ҫӗкленӗвне путараҫҫӗ, пурнӑҫӗн вӗҫӗнче вара Писательсен союзӗн член билетне ҫӗнӗрен параҫҫӗ. А.Золотов, Писательсен союзӗн ҫав вӑхӑтри председателӗ, ҫапах та тӗрӗсне палӑртнӑ: «Ялавинсем писатель творчествине критиклес ӗҫ патне писатель мӗнле ҫемьере ҫуралса тухнине кӑтартакан анкетӑпа кӑна ҫирӗплетеҫҫӗ». Ялавинӗ те пӳкле писатель, чӑваш литературин классикӗ. Чунӗ хушнипе мар, «органсем» хӗтӗртнипе ҫырнӑ теҫҫӗ Ржая ҫапса хуҫмалли статйине 1935 ҫулта. Ертсе пыракансене ҫак нӗрсӗр меслет пултаруллӑ ҫыравҫӑсене пӗр-пӗрне вӗслетсе пурӑнма, нӑхтара тытма кирлӗ пулнӑ пулмалла. Кайран вара пурин те ҫӑлӑнма май ҫук йӳҫлӗхре пӗтмелле пулать. Пултаруллӑ Ялавинӑн шӑпи те, Ржай шӑпи пекех, пӳкле вӗҫленет, литература хутлӑхӗнче вӑл кирлӗ мара тӑрса юлать.

Литературӑри 20-30-мӗш ҫулсем хальхи ҫамрӑксемшӗн пурнӑҫ тӗкӗрӗ е пурнӑҫ юлташӗ, ҫул кӑтартуҫи пулмалла пек. Вӑл тапхӑра чӑннӑн ҫырса пама шутлакан хӑҫан пулӗ тулккӗ? Ҫав кӗнеке тепӗр приключенилле хайлавран интереслӗрех пулмалла.

1935 ҫулта «Красная Чувашия» хаҫатра В.Ржай калавӗсем пирки С.Ялавинӑн «Кулацкий звонарь» статйи тухсан, ҫунатне вӑйлӑн сарса янӑ писатель ячӗ чӑваш литературинче пачах тенӗ пек курӑнми пулать. Чӗри урӑх вӑй илеймен В.Ржайӑн. Ҫапла пурӑнатпӑр эпир, чӑваш ҫыравҫисем, хамӑр пуянлӑха хамӑр таптаса. Талантлӑ писателӗн ҫырас кӑмӑлне татса хамӑр шутсӑр паха япала ҫырас пек. Халӗ тепӗр чир хуҫаланать пирӗн литературӑра. Ҫыр та ҫыр темелле, ҫырни курӑнсах каймасть, ҫырсан та – пичетлеме хӗн, хӑвӑн укҫа-тенкӗллӗ пулмалла. Тата урӑх чир те пур. Пӑхӑсӑн: ҫынни йӗркеллӗ ҫырма та вӗренеймен темелле, анлӑ профиллӗ механизатор пек кӑкӑрӗ ҫине хисеплӗ ят ҫакса та янӑ. Вара ҫырнипе мар, хисеплӗ ят илнипе каппайланса ҫӳрет. Юрӗ, ҫыракансем пурте суккӑрах мар, тӗшшине уяма пӗлеҫҫӗ. Литература Гиннес рекорчӗсем тумалли ӑмӑрту мар.

Виктор Ефремович Ржайӑн ҫуралнӑранпа ҫӗр ҫултан, ҫырма пӑрахтарнӑранпа ҫитмӗл ҫултан, ятарлӑ кӗнеки пичетленсе тухрӗ: «Ҫырнисен пуххи». 2004 ҫул. Чӑваш кӗнеке издательстви. Сӑвӑсем, поэмӑсемпе калавсем, повеҫсем, статьясемпе ҫырусем, документсем кӗнӗ унта. Ҫапла ӗнтӗ, вӑл мӗн ҫырни пӗтӗмпех кӗмен-тӗр-ха кунта. Вӑл вырӑсла та ӑнтарса ҫырнӑ тата. Мӗн вулама пӳрни те Виктор Ржай тӗлӗнмелле пысӑк писатель пулнине ҫирӗплетет. Вӑл никама та чавсапа хирмесӗр пӗртен-пӗр хӑйне тивӗҫнӗ вырӑнне йышӑннине калать. Иртнӗ ӗмӗрӗн вӑтӑрмӗш ҫулӗсенчи идеологи тӗрлеттерекен арпалӑх тусанӗ сирӗлсе пӗтнӗ, чӑн сӑмахӗ, чун сӑмахӗ юлнӑ – ҫапла каласси кӑмӑл килет манӑн Виктор Ржайӑн ҫырнисен пуххипе паллашсан.

Ҫӗнни патне туртнӑ комсомолла яшлӑх В.Ржая. Чӑваш ҫӗршывӗн ҫӗнелӗвне чӑннипех ӗненсе ҫамрӑк кӑмӑл сӑвӑ ӗлккенне чӑмать. Сӑвӑра та В.Ржай пиҫӗ, вӑхӑт таппиллӗ, сӑнарлӑ. Ытти тантӑшӗсем пекех вӑл та чӑваш чӗлхи чӗрӗлӗвне ӗненет, уншӑн савӑнать. Мускаври радиопа чӑваш чӗлхи янӑранӑшӑн поэт ҫӗкленӳллӗ, чӑвашшӑн Ҫеҫпӗл пекех кӑварлӑ.

«Чӑваш чӗлхи сӳнмест, вӑл хӑй кӑварлӑ,
Ыйтап, пӗлтер эс ман кукаҫее.
Ман тӑван ҫӗршыв, ӑнлан, пир-арлӑ,
Ҫӑпатинчех сыхлать вӑл телее», – тет хастар ҫамрӑк чӑваш ҫӑпатарах хӑй телейне сыхланине кура. Телейлӗ вӑхӑт! Ҫӗкленӳллӗ кӑмӑл! Чӑваш чӗлхин татса памалли ыйтӑвӗсем малта иккенне сӗмленесшӗн те мар-ха поэт. Мӗн калӑн, ҫӗкленӗвӗсем вӑхӑтне кура.

Ҫӗнӗ самана ҫитнишӗн хӗпӗртесе, кӑкӑрӗнче савӑнӑҫ юрри шӑрантарать

В.Рзай, салтака каякан ача куракан хĕвеле те вăл хĕрлĕ шĕнел тăхăнтарать:

«Паян ак ялта эп тăсăп купăсăма,
Ыран тухса каятăп çак çĕршывăмран.
Тăван анне, кала, мĕн-ма йĕрен, мĕн-ма?
Юратнă ывăлу пулать Хĕрлĕ Çарта...

Ан йĕр, чăнах калатăп, халь ĕлĕкхи мар,
Çара каяп пулсан, каяп хамăршăнах.
Ав кур: унта хĕвелĕ – çут тӳпери улма –
Вăл та тăхăннă паян хĕрлĕ шĕнел».

Поэта çине тăрса хавхалантармалла чухне, «Çамрăк вăхăт» сборникĕ тухсанах, кăмăлне хуçнă иккен унăнне. Кӳпкемелли çын шыраса тупнă майăн ярлыкне малтанах тупса хунă тейĕн. 1934-мĕш çулхи февралĕн 7-мĕшĕнче Шупашкарта пулса иртнĕ писательсен пухăвĕнче туса панă докладра С.Ялавин çапла калать: «Рзай уççăнах хаяр кулакла поэт пулнă, халь те вăл çаплах, кулакла поэт пулса тăрать». Çапла ĕнтĕ, докладçă çӳлтен хушнине тăвать. Çӳлтен хушаканнин те хăйĕн ĕненĕвĕ пур, тата çӳлтен хушаççĕ. Пĕр парти хуçа пулса пурăннă вăхăтра никамăн та урăх шухăш пулмалла мар, пурте пĕр лачакана сурмалла. Сурнă вара. Петĕр Хусанкайпа, Митта Ваçлейĕпе пĕрле Виктор Рзая та комсомол ĕретĕнчен кăларса яраççĕ – хăйсен йышне таса тытаççĕ. Ку çынсем чăваш халăхĕн пулас чапĕ иккенне пĕлес те темен ĕнтĕ вĕсем. Çапла, чи малтан чи пултаруллисене критика чукмарĕ тивнĕ. Çак хутлăхра Исаев Мĕтри те питĕ тăрăшса ĕçленĕ. Партилĕхшĕн, çамрăк çыравçăсен хушшинчи хăйсене çеç тивĕçтерекен тасалăхшăн тăрăшакан Исаев Мĕтри «Çамрăк писательсемпе комсомол» статьяпа пĕр вăхăтрах темелле «Пролетари литературишĕн» кĕнеке çапса кăларать. Вăхăт еккине тивĕçтерсе çӳлерех асăннă статьяра вăл çапла пĕтĕмлетӳ тăвать: «Комсомолтан кăларнишĕн çамрăк поэтсем хăйсем çеç мар, комсомол та айăплă. Çак пăтăрмахлă ĕç вăл комсомол политика тĕлĕшĕнчен çамрăксене вĕрентсе çитерме пултарайманнине пĕлтерет. Митта Ваçлейĕпе Петĕр Хусанкай хыççăн виççĕмĕшĕ вăл – хăйĕн сăввисенче пуринчен ытларах пĕччен вĕлтĕртетекен çамрăк поэт Рзай».

Çамрăк хунава хĕрхенмест Исаев Мĕтри, çыравçăн хăйнеевĕрлĕхне ăнланас та, тĕпчес те темест. Малалла çапла çырать: «Рзай юлташăн иртнĕ çулла, кĕркунне çырнă сăввисенче пессимизм, кичемлĕх туллиехчĕ, хăшнепĕрне вилĕ тăпри шăрши çапса кайнăччĕ. Халь Рзай сăн-сăпачĕ урăхланса пынă пек туйăнать, редакци çывăхнерех пыни пăртак килĕшрĕ пулмалла, атту ачан шанчăкĕ урăхланни лайăх палăрмасть-ха. Çапах та, Ваçанкка калашле, Рзай уйăх çине час та час хăпарма, вăрмансем урлă мулкачсемпе тавлашса чупма юратарах парать. Совет çĕршывĕнче социализăмла хозяйствăпа уйрăм капиталистла хозяйствăсем тавлашса чупнине сăнама вĕрентес килет пирĕн Рзайсене».

Исаев Мĕтрипе Рзай Викторĕ – пĕр ялсем, хамăр республикăри Вăрмар тăрăхĕнчи Кавалсем. Пĕр ялсем кăна та мар-ха, тăвансемех темелле – иккĕшĕ те Исаевсем. Мĕтри ачаллах тăлăха юлнă, Мускаври ача çуртĕнче выçлăх çулĕсенче пурăннă, Виктор ытлă-çитлĕрех çемьере çитĕннĕ, ун пекшĕн Мĕтри пĕртанлăхшăн кĕрешекенскер, тăванне те юратман. Паллах, иккĕшĕ те тăван литературăна савнă, уншăн кашни хăйне май çунса ĕçленĕ. Мĕтри «тĕрĕслĕхĕ», ав, истори урапи айне пулса юлчĕ. Рзай чăнласа ĕçлени ялanлăхах карта, илеме ларса пырать. Саманине кура, хăвна çеç тĕрĕс тени пур чух та чăнлăха тухса пымасть çав...

Кавалти тавралăх музейĕн директорĕ П.Пряников ăнлантарса панă

тӑрӑх, Рзай таврашӗ – питӗ авалхи йӑх. Тӗрӗк чӗлхипе калаҫнӑ пӑлхарсем ҫинчен калакан историлле документсенче «Ирсай-Ирзай», «Рсай-Рзай» ятсене XVI ӗмӗрсенчех асӑннӑ. Кавалта 1757 ҫулта чиркӳ лартсан чӑвашсене тӗне кӗртнӗ хыҫҫӑн Рзай ята Исай ят парса улӑштарнӑ. Ҫапах та «Рзай» иккӗмӗш хушамат шутӗнче сыхланса юлнӑ. Кавал масарӗ ҫинче паянхи кунччченех упранать». Ку ӑнлантарса пани «Хӗрлӗ ялав» хаҫатра 1996-мӗш ҫулта, нарӑсӑн 6-мӗшӗнче ҫапӑннӑ. Чиркӳ панӑ Исаев хушамата йышӑнман В.Е. Рзай. Мӗншӗн тесен вӑл аслӑшӗсен аваллӑх сассине илтсе тӑракан чӑваш пулнӑ, ҫавӑнпа вӑл – Рзай!

Сӑвӑллӑ ҫӗкленӳпе кӑна ӗҫленӗ пулсан та, чӑваш литературинче Рзайӑн ячӗ тӗприсен шутӗнче пулатчӗ. Вӑл вара, хӑйӗн хӑватне ӗненсе, кӑкӑрӗнчен сӑвӑ вӗҫертсе кӑларнӑ хушӑрах прозӑн тертлӗ чӑтӑмне те вӑйлӑн кӗрсе каять. Ҫакӑнта вӑл ҫӗнтерет те, хӑй мӗн калама пултарнине вирлӗн калать. Прозӑра Рзай кӗрнек, ҫирӗп, ӑста. Паян кун ун пек ҫырнине эпир «классика» тетпӗр.

Акӑ Рзайӑн Исаев Мӗтри тиркесе пӑрахнӑ «О, хӗвел!» калавнех илер. Кӗске япала вӑл. Анчах та вӑл ҫак кӗске калаврах тепри роман текен кӗнекинче те каласа пама вӑй ҫитереймен хӑюллӑхпа хӗвел айӗнче тӗрӗс мартан юн тӑкса, телейсӗрленсе пурӑнакан этемлӗх ҫинчен сӑнарлӑн каласа парать. Исаев Мӗтри ку калава «калав мар, эскиз пулать» тесе пӗтерсе хурать пулин те, автор шухӑшӗ пачах унӑн эскизлӑхӗнче мар, хайлавӑн, ман шутпа, «тӑват хӑмаллӑ тупӑк та кашнишӗнех мар иккен ку тӗнчере» текен чӑнлӑхра, Куҫман вӑрҫа илсе кайса тӗлсӗр-палсӑр ҫухалнӑ ачине макӑрса кӗтнинче: «Ӑҫта ман Петька, Петька ӑҫта?»

Рзай ку калавра пур япалана та хӑй ӑсӗпе пахалама килӗштерекен нушаллӑ Куҫма, унӑн чирлесе вилекен ятсӑр арӑмӗ, вӑрҫа кайса ҫӗтнӗ Петька ывӑлӗн сӑнарӗсем урлӑ вӑрҫа, сӑнарсенчен хӑйсенчен амаклӑха сивлекен анлӑ пӗтӗмлетӳсем тӑвать. Куҫма хӑйпе пулса пыракан пур терте, уҫҫа-хуппа та тӳрех яр-уҫҫӑн ӑнкарса илеймест-ха. Пурнӑҫӑн хӑнӑхнӑ йӗркинчен пӑрӑнма шухӑшламасть-ха Куҫма, пасар халӑхӗ пек «Патша толо-о-ой!» тесе кӑшкӑрмасть: «Ку тӗлте Куҫма чистиех хытса кайрӗ. Ӗмӗр илтмен сӑмах илтрӗ вӑл, хӑрушӑ, тискер сӑмах.

Мӗнле «толой»?! Ухмах, мӗн ҫухӑратӑн эс тесе каласшӑн пулчӗ вӑл ӑна. Анчах кӗлетке чӑннипех хытса ларнӑран ҫӑвара уҫтармарӗ».

Халӗ ку калав «... вӑл Керенский вӑхӑтне ырлать, ун чухнехи саманана пит килӗштерет пулас вӑл», тенӗ пек, Исаев Мӗтри каланӑ пек, вуланмасть, тӗл-тӗл вӑл псалом пек, мухтав юрри пек вуланать. Революци шавкӑнне мухтамасть автор, революци хушӑран-хушӑ хура халӑха шавкӑнлатса хӑварнине сӑнарлӑн калать:

«Таҫта пӗр хӑватлӑ вӑй аслатиллӗ саспа пӗрех ҫухӑрнӑ.

– Ре-во-лю-ци! – тенӗ.

Темиҫе пин пӑтлӑ тар пӗрчи пек ҫурӑлса тухнӑ ҫак сӑмах. Тӗлӗнмелле хӑвачӗпе тӗнче никӗсне килсе тапнӑ...

– Ре-во-лю-ци! – тенӗ хӑватлӑ вӑй...

...Халӑх пинӗ-пинӗпе урамалла тапнӑ, ҫӗр ҫуммипе ҫӳрекен хура, тачка пӗлӗтсем пулса ҫӗнтерӳ юррине юрланӑ... Пусмӑрлӑ пурнӑҫ йӑлӑхтарчӗ пире, сывӑ пултӑр ирӗклӗх!

– Урама тухӑр! Кам пӳртре, вӑл – хӑравҫӑ е ман тӑшман! – тенӗ ҫӗнтерӳ юрри».

Этемлӗх пурнӑҫӗнче вӑхӑтран-вӑхӑт ҫавнашкал шавкӑн сиксе тухасса Рзай курса тӑнӑ пекех туйӑнать. Хальхи вӑхӑта сӑнарланӑ пекех. Ҫавӑнта ӗнтӗ, паллах, ассӑн сывласарах каласан, Исаев Мӗтри «ку эскизра Рзай ма-

лалла кайни куранмасть» тесе суккӑрла пӗтӗмлетнипе килӗшес килмест. Хӗвелӗ вара чӗмсӗр, вӑл – тӳре: «Ой, хӗвел, ҫав тери аслӑ, ҫав тери йӑваш хӗвел, мӗн шухӑшлатӑн-ши эс этемлӗх ҫинчен – сан таса, пӗр вӗҫӗмсӗр уйусем, улӑхусем ҫинче ылтӑншӑн ҫӑтӑхса юн юхтаракан этемлӗх ҫинчен?» Пӑтапа ҫапса лартса каланӑ тейӗн. Вирлӗ! Тӗрӗс! Пӳкле!

Иртнӗ ӗмӗрӗн 30-мӗш ҫулӗсен пуҫламӑшӗнче саманан кӗрлесе ҫунакан ҫамрӑклӑх кӑмакине В.Рзай прозаик ыткӑнса кӗнӗ темелле. Вӑркӑнса кӗнӗ те вӑл ҫав кӑмакарах ҫунса та кайнӑ. Вуттине хурса тӑраканӗсем, паллах, парти обкомӗн ертсе пыракан ҫыннисемпе пурне те хӑйсем пек тутарма тӑрӑшакан критиксем пулнӑ. Виталий Станьял тӗпчевҫӗ В.Рзайӑн «Ҫырнисен пуххи» кӗнеке ум сӑмахӗнче ҫавӑн пек ҫынсем пирки ҫапла кулянса ҫырать: «Ӳнер япалинче мӗн ытлашши, мӗн ҫитмест – кам татса калама пултарӗ? Ӑсталаканӗ кӑна! Сана мӗн килӗшмест пулсан – пӑрӑнса ирт. Мӗн те пулин ырри курӑнчӗ – пӑхса тӑр, вула, тишкер... Ҫук, апла мар хӗстерсе лартнӑ саманари ӑсталӑх ӗҫӗ: кам ҫинчен ҫырмалла, мӗнле ҫырмалла – санчченех палӑртса хунӑ.

XX ӗмӗр вӗҫӗнчен пӑхсан, ҫав тапхӑр айван пуҫлӑхсен тискер вӑхӑчӗ пек туйӑнать. Ӑслӑ ҫынсем ӑна хирӗҫ тӑрайман, пӑрӑнса иртеймен. «Чышкӑ тытӑмӗ» XIX ӗмӗрте кӑна мар, кайран та алхаснӑ, ҫавӑнпа халӑхӑн таса чунлӑ та ҫивӗч ӑслӑ ывӑлӗсене – Н.В.Никольские, Г.И.Вандере, Д.П.Юмана, А.П. Миллие, Д.С.Эльмене, Тимухха Хӗветӗрне, Виктор Рзая, Митта Ваҫлейне тата чылай-чылай ӑстасене таптаса тӑкнӑ».

Виктор Рзайӑн илемлӗх тӗнчи паян та тӗпчемелли тӗнче. Иртнӗ ӗмӗрӗн вӑтӑрмӗш ҫулӗсенче унӑн пултарулӑхне самана еккин тапхӑрӗсене кура тӳрремӗнех тӗпченӗ пулсан, хальхи вӑхӑт ун пултарулӑхне психологизм урлӑ, хайлаври сӑнарсем лекнӗ хиврe лару-тӑрӑва кура тӗпчеме ыйтать.

В.Рзай прозин сӑнарлӑхӗ тарӑн. «Тимян пичче» калавра автор пурнӑҫ уҫҫи-хуппине тупайман Тимян пиччене хайлав тӗпелне лартать, пурнӑҫ тулхӑрӑвӗ урлӑ унӑн улшӑнса пыракан ӑшчикне тӗпчет. Айӑн-ҫийӗн пӑтранакан ахӑр саманара вӑл хӑй ӑслайӗн чанне те пӗлсе ҫапасшӑн. Тимян пичче – чиркӳре чан ҫапакан. «Хӗрес чуптума пуҫларӗҫ, – тет аялтан такам Тимян пиччене. – Хатӗрлен ҫапма!» – хушать аялти. Тимян – шухӑшлакан ҫын. Этем тенӗ япала хӑйӗн сӑн-сӑпатне ҫухатрӗ, намӑса пӗлми пулчӗ. Эпир пӗчӗккӗ чухне пӗртте кун пек марччӗ. Халь ун пек мар, халь пурнӑҫ – ҫавра ҫил. Ҫӗр ҫинчи чуна пӗрне те хӑйӗн вырӑнӗнче вырттарса хӑвармасть, пурне те хӑйпе ҫӗклесе тулласа тӑкать. Ҫитрех пуль ҫав – ахӑр самана».

Тимян пурнӑҫ уҫҫи-хуппине тупасшӑн. «1914 ҫултан, вӑрҫӑ пуҫланнӑ ҫултан пуҫласа, паянхи вырсарни куна ҫитиччен ӑнланмалла мар пурнӑҫ тулхӑрать Тимяншӑн. Пурнӑҫ хӑй майӑн пынӑ ҫӗртенех тулхӑрса кайнӑ, хресчен уйӗсем этемлӗх тенӗ чуна савса, тӑрантарса пурӑнакан уйсем юнпа варалннӑ. Тем ҫитмен, темшӗн юн тӑкаҫҫӗ ҫынсем».

Арҫени атте те туллашать. Вӑл – пуп. Халӑх чиркӗве ҫӳременни, ҫамрӑксем венчете тӑманни, чиркӳ старости сахал укҫа пуҫтарни туллаштарать ӑна. Пӗлнӗ пекех, ӳлӗмрине курса тӑнӑ пекех вӑл ҫапла калать: «Малалла чӑтса пулмасть. Ҫитет вӗсенле пурӑнни. Малаллахи пурнӑҫ вӗсен мар, вӑл пирӗн! Пире манман ҫынсем те тӗнчере сахал мар. Ҫӗр ҫинче Англи пур чухне...»

Юлашки хут Арсени атте 20-мӗш ҫулта туллашнӑ. Ун чухне иккен вӑл ӗмӗчӗ ҫитмен пирки, Колчака Ҫӗпӗр хыҫнех хӑваласа ярсан, унтан хӑйӗн тепӗр пилӗк стеналлӑ ҫуртне коммунистсем пырса кӗрсен, юлашкинчен пин тӑваткӑл чалӑш улма пахчине тытса илсен туллашнӑ. Анчах кайран лӑпланнӑ. Иккен лӑпланмасӑр тӑма та май килмен ҫав ун чухне.

Ку чухнехи вӑхӑта та, ман шутпа, пырса тивет ку япала. Тимянӑн хӑйӗн

шухăшĕ çукрах. Самана кукрашки май улшăнса пырать ун шухăшĕ. Малалла вăл çĕнĕ пурнăç чанне çапма пултармалла. Самана çилĕ мĕнле – Тимян та çаплалла. Мĕн калăн – перестройка. Ку калавра мана Виктор Ефремович Рзай кăнтăр çутинче Диоген хунарĕпе çӳренĕ пекех туйăнса тăрать.

В.Рзай кашни хайлаврах вăхăт тӳри пулать пулин те, вăл лару-тăру ăсти те. Акă, виçĕ-тăватă страницăна вырнаçмалли калаврах В. Рзай вăхăт паллине, характер сулăмĕсене лайăх аванлатса кăтартма пултарать. Нимĕн те пулса иртмест пек ку калавра («Танюк пичче»), сăмахĕ паранкă лартасси тавра кăна пулса пырать, ĕçĕ-пуçĕ вара йăлтах куç умĕнче. Сăрă ăсти ӳкернĕ пек хитре ӳкерчĕк. Хирĕçĕвĕ ку калавра – пĕчĕк хирĕçӳ кăна: Танюк пичче пахчинче анчах паранкă лартасшăн. Арăмĕпе ывăлĕ уя та лартасшăн. Танюк пичче туллашса каять. Арăмне, тӳшек çинче пĕрле выртса тăраканскерне, çапса та пăхасшăн. Çавна пула Танюк пиччен урайĕнче хыт çĕртех çывăрма тивнĕ. Арăмĕ шурă сухаллă Кĕçтенкки паранкă ытларах лартса выçлăх çулхине выçса вилесрен хăтăлса юлнине калать. Лешĕ камсумулсемпе явăçса çӳреме те вăтанмасть иккен. Танюк шухăша каять, ун хăйĕннех тутарас килет. Вара Кĕçтенкки патне тухса утать. Кĕçтенкки патĕнчен таврăнсан вăл арăмĕпе ывăлĕ «çемçен калаçса» яшка сыпса ларнине курать, вĕсене кăçал, чăн та, паранкă тата чĕкĕнтĕр ытларах лартса хăвармаллине калать. Выçлăх çулхине Кĕçтенкки çапла тунă иккен. Çĕнĕ самана енне сулăнать Танюк пичче. Çăтă калав. Пур япалана та хăй вырăнне лартса çырнă. Техĕмлĕ. В.Рзай кунта çук ĕç-пуçлă япаларах хăй прозăн пысăк ăсти пулнине кăтартса парать. Сăнарсен хушшинчи çыхăнăва меллĕн илсе пыма пултарнине витĕмлет.

Тепĕр калав. «Кӳршĕсем». Питĕ сăнарлă çырнăскер. Колхоза кĕме васкаман Еккимпе колхоза кĕнĕ Ихменĕн хĕрлĕ хăмапа хура хăма умĕнчи пăшăрханăвне çырса кăтартни çеç темелле. Екким урлă пулса пырать ку калав. Колхоза кĕрсен такам ун ятне пысăк саспаллисемпе Ихмен ятĕнчен çӳлерех хĕрлĕ хăма çине çырса хунă пек туйăнса каять. Çавă кăна. Çĕкленӳпе хутăш ăмсану калавĕ. Каçхине, килне таврăнсан вара, Екким ултă çулхи ывăлне савăнса кайса пĕрлешӳллĕ хуçалăха кĕме заявлени çыртарать. Хĕрлĕ тĕс илĕртет ăна. Хĕрлĕ тĕсре курать вăл ыранхи лайăх пурнăça. Мунча алăкĕн тутăхса кайнă тăпси çумĕнче (ахăртнех, пурнăç тăпси) пĕр чăмăркка пахча хăнклисем купаланса йăшăлтатаççĕ. Пĕр çеçке пилеш çырлисем пек курăнса каяççĕ вĕсем Еккима. Вĕттĕн чĕпĕтекен шухăшĕсене, ахăртне, шултăра тăвасшăн-ха Екким. Вулама кăсăк. Асăннă хайлавне ăста витĕрет В.Рзай. Сахал сăмахпах. Çавă пулĕ ĕнтĕ вăл пултарулăх палли. Хĕрлĕ хăма çинчи «хĕрлĕ тăхăннă сăмахсем» Еккиме, ялĕнчи «пирĕн юлашки чĕппе», хăйсен йышнех ăнтăлтараççĕ.

Пĕрлешӳллĕ ĕçе питĕ килштерет В.Рзай. Хурăнташлăха, эппин. Ку вăл – чăваш туртăмĕ. Çав «савăнăç çуратнă ушкăн» ятнех унăн тата тепĕр калавĕ те («Бригадир кинĕ»)... Кирук, Анахвис, улăх... Туйăм улăхĕ: «Улăх çулса пăрахнă утăпа сывланă». Ку калавĕ «Пĕрлешӳллĕ ĕçре» ярăмран. Анахвисăн калаври сăнарĕ те такам ăмсанмалла: Анахвиса тĕкĕнме çук, вăл тирпейлĕ хĕр. Паян бригада премиилмелле лайăх ĕçленĕшĕн. Улăх хĕрĕсем шӳтлеççĕ: «Пирĕн бригада преми илет паян. Михал пиччене... мĕн парĕç-ши Михал пиччене, пирĕн бригадира, хĕрсем. Эп пулсан ăна сатур та ăшă чĕреллĕ преми памалла. Пĕлетĕр-и, мĕн вăл? Кин вăл! Кин памалла эп ăна, кин памалла. Анахвис, илтетĕн-и? Мĕншĕн-ха эс килĕштерместĕн Кирука? Мĕнрен начар вара вăл? Мĕншĕн так ахалех асаплантаратăн эсĕ ăна? Ах, мĕскĕн Кирук, мĕншĕн юрататăн-ши‘эс çак тĕртĕнме çук Анахвиссана?»

Анахвисĕ те килĕштерет иккен Кирука. Вĕсен иккĕшин хушшинчи юратă-

ва ушкăн çуратнă. Çав ушкăн патнех кайма чĕнет Кирука Анахвис: «...халь хамăр бригада патне кайăпăр, халь сан аçу патне, ман атте патне кайăпăр, халь савăнăç çуратнă ушкăн патне кайăпăр», – тет Кирука Анахвис. «...Вĕсем ял еннелле улăхрĕç. Улăх юрă итлерĕ». Çапла йĕркесемпе пĕтет калав.

В.Рзайăн «Çырнисен пуххипе» паллашса пынă майăн мана тыткăнран вĕçертмесĕр пĕр шухăш йĕрлесе пычĕ. Акă мĕнле шухăш: эпир, чăваш «ăсчахĕсем», тăван литературăмăрăн пулса çитĕнес чи пĕрремĕш писательне, çунаттисене касса, вĕçейми туман-и-ха, путарса хума тăрăшман-и-ха? Çапла пек туйăнать. Хамăртан уйрăлса кайнисем никам та ан çилленччĕр те, эпир сума сăвакан хăш-пĕр классиксенчен чылай-чылай çӳлте тăрать вăл. Ун чухнехи кĕрлевлĕ самана виçипе те. Шел. Çапла пурăнатпăр ĕнтĕ эпир, чăвашсем. Питех те шел. Хамăра турри панă пуянлăха хамăр тăрăшса тĕп туса хунă иккен эпир.

Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем чăмăртаннă тапхăрпа çыхăнтарса анлă хайлав çырма пикенсе хурать В.Рзай. «Тăпра калаçать» повеç хавалĕпе калăплать ăна малтан. Каярахпа, роман тăвас тесе, аталантарса ярать. Унăн пĕр сыпăкĕ «Ĕретлĕ пул, пуçана!» ятпа 1934 çулта «Сунтал» журналта çапăнать. Пысăк хавхаланупа пуçланă хайлав шăпах ВКП(б) Тĕп Комитечĕн çав вăхăтри «Писательсен ĕçĕ çинчен» постановленийĕ тĕлне çапăнса тухать. Асăннă постановлени «илемлĕ литература социализăмшăн пыракан хаяр кĕрешӳре çĕнĕ çынна тарăнрах та тĕрĕсрех кăтартма кирлине» тепĕр хут хытарса хăварать.

Хальхи куçпа пăхсан, ман шутпа, хайлавра тиркесе çырмалли нимĕнех те çук пек. Йăлтах вăхăт паллиллĕ, çĕнĕ çĕкленӳллĕ вăл. Апла пулин те, Чăваш пролетари писателĕсен ассоциацийĕн (ЧППА) секретариачĕ, повеçĕн пĕрремĕш пайĕ пичетленсе тухсанах В.Толкович-хутар (Долгов) çырнисене пĕртен-пĕр тĕрĕс шухăш вырăнне хурса, ăса вĕрентмелли резолюци йышăнать. «Рзай повеçĕн «Тăпра калаçать» ятлă сыпăкĕ те, сыпăк кăна пулнипе, произведенин тĕп шухăшне ăнланса илме памасть, сыпăкне уйрăммăн илсессĕн – унта политикăлла йăнăшсем, идеологи тĕлĕшпе пысăк çитменлĕхсем палăраççĕ», – тенĕ унта. Иккен Парти обкомĕнчи агитпроп пайĕн пуçлăхĕ И.Кузнецов 1934 çулта çак шухăшсене тата хытăрах каланă. «Утăм» альманах ЧППА «ăс панине» итлет, повеçĕн иккĕмĕш пайĕнче çитменлĕхсене тӳрлетни çинчен пĕлтерме васкать.

Çав тапхăрти илемлĕ литература тавра критиксем мĕнешкел хĕвĕшсе мала тухса ăмăртни интереслентермест мана, Виктор Рзайăн сăнарлă каласа пама пĕлни тыткăнлать. Хăй вăхăтĕнче тĕссĕр япаласене журналсенче чылай вуласа ларнăран, темле уçă çĕре, сывлăхлă çĕре тухса ӳкнĕ пекех туятăн хăвна.

Çӳлтисем хĕстерсе каланисене шута илет В.Рзай. «Тăпра калаçать» повеçе пичетленĕ хушăра унăн пĕрремĕш пайне çĕнетсе юсаса парать. Романне кĕнеке халлĕн курасси килнĕ ĕнтĕ писателĕн. Повеçĕ те, романĕ те кун çути курайман. «Килти архивĕнче тӳрлетнĕ ал çыру 1972-мĕш çулта пурччĕ. Ăна писатель мăшăрĕ Елизавета Петровна кăтартнăччĕ. Кĕтмен инкек пек, 1982 çулта ал çыру курăнмарĕ. Ăна В.Е.Рзай тăванĕсем е кĕнеке кăларĕшĕнчи (издательствинчи) юлташĕсем илсе кайман-ши?», – тет асăннă ум сăмахра В.П.Станьял. Алçырусем çунмаççĕ теççĕ те, чăвашсен çунаççех пулĕ çав...

«Пушар» хайлав Виктор Рзай пултарулăхĕнче саманапа çын çинчен каласмалли чи тĕслĕхлĕ япала темелле. Сăмах кунта пайтах çулсем хăнăхнă йĕрпе пыракан ĕмĕрсене сасартăках тĕпрен аркатнă тапхăрăн пуçламăш саманчĕсем пирки пырать. Тĕрĕсрех каласан, иртнĕ ĕмĕрĕн вун саккăрмĕш çулĕ, граждан вăрçи вăхăтĕнче пăлхав çĕкленĕ чехсен пăтранăвĕ урлă ге-

ройсен хĕресленнĕ пÿкле шăписем пирки. «Пушар» повесть 1928 çулхи «Сунтал» журналăн 1-5-мĕш номерĕсенче пичетленнĕ. Ăна авторĕ Октябрь революцийĕ вунă çул тултарнине халаллана. Çапла сулăмпа хавхаланнă Виктор Ефремович. Çĕнĕ самана çитнипе каçса кайса хĕпĕртенипе, вăхăт еккин савăнăçĕпе саманта пуç çапса çырнă хайлав мар ку, паллах. Хĕвел айĕнче пурăнакан ырă пурнăç енне çул шыраса утакан этемлĕх йышĕн асапла-тертлĕ хăшкăлăвĕ ĕнтĕ. Вăхăт аренинче икĕ хире-хирĕçле вăй – хĕрлисемпе шуррисене пайланнă çынсем. Пĕр енче – Павăл (Паня), Данил, Крутĕн, таркăн офицерсем, тепĕр енче – Энтри, Вениамин, Тимук пичче, Кĕтерне инке, «йĕкĕр алăка хупмасăрах хапха умĕнче кĕрмешрĕç те... таçтан-таçтан килсе тăнă урапа сассисем шăнкăртатса аялти-аялти урамалла станцă çулĕпе анса каякан» кĕрмешÿре çиеле тухнисем.

«У-у-у-у! улать çил... Йынăшаççĕ карта шăтăкĕсем, хуçăлакан йăмрасем. У-у-у-у! тискеррĕн уласа иртсе каять çил. Йынăшса пĕшкĕнсе юлаççĕ çуртсем, улăм витнĕ çуртсем çĕлĕксемсĕр тăрса юлаççĕ, вĕсене çилленнĕ пек, тĕттĕмре курăнман чышкипе килсе çапать урнă çил, çĕлĕксене лутăркаса пăрахать çĕре. Ах, мĕн пысăкăш-ши çил чышки, мĕн тĕслĕ-ши? Кам курнăши ăна? Кам-ши? Çук пуль, курман пуль никам та...» Асапланать çанталăк, асапланать этем. Ав, вĕçĕ-хĕрри те курăнмасть унăн, тăнăçлă ыранĕ те.

В.Рзай ку пăтăрмаха, каласа памалли хайлав хевтине суйласа илнĕ май, вăхăтăн татăк-кĕсĕкне палăртма, татăк-кĕсĕкĕн вĕрекен сапаланчăк çил аснине тĕпе хывса калăплать. Ĕненмелле калăплать. Пысăк ăсталăхĕпе хăйне хисеплеттерет. Пирĕн шутпа, кивелми пĕтĕмлетÿсем тăвать.

Иртнĕ ĕмĕрĕн çирĕммĕш çулĕсен вĕçĕнчи кĕрлесе çĕкленекен пултарулăх хунавĕн талантлă ачисене никамах та пуçран лăпкаса ÿстермен, чунĕсемпе çырăннă япаласем çине хайлавĕсем тухнă-тухманах тиркев йăтăна-йăтăна аннă. «Пушар» хайлав та çав мереккерен хăтăлса юлайман, юлма та пултарайман, ара, тĕп сăнарĕ унта шуррисен салтакĕ – прапорщик-çке, çĕнĕ пурнăç тăвакан çын мар, вăхăта хирĕçле çын. Тиркевĕ те çавăнтах. Г.Кузнецов-Кели сăвăç-критик «Пушар» повеçĕн Рзая çапла тăн парать: «Рзайăн «Пушар» повеçĕнчи тĕп герой – прапорщик – совет тăшманĕ, ăна автор кăмăлланипе вăл пит аван çын пулса тухнă. Вăл: «Мĕне кирлĕ мана вăрçă?» – тет. Кунта тата ыттисенчен шутласан та вăл пит аван çын пек, вулакан та (сăмахран – вак буржуа) автор шухăшĕ хыççăн каять. Паллах, Рзай прапорщик сăнне тĕрĕс кăтартман, прапорщиксен тĕп масси контрреволюциллĕ пулнă, вăрçа хирĕç пулман, хăйсен класĕшĕн çирĕп тăнă». Тĕлĕнмелле пек ĕнтĕ: илемлĕ произведение хаçат статйи пек пахалаççĕ, автор хăй умне лартнă илемлĕх мелĕсемпе мар. Тÿррипе критик çапла пĕтĕмлетсе çырнинчен ним тĕлĕнмелли те çук. Вăхăчĕ çапла ыйтнă, шуррине шурă, хĕрлине хĕрлĕ темелле пулнă. Авторĕ художник пулнине, темиçе вуншар çул малалла курса тăма пултарнине шута картма та пултарайман. В.Рзай çыравçăсен кайăкхур картинче халĕ те малта-ха, ертÿçĕре. Тĕнчипе Пушар кĕрлет, унăн вĕçĕ те, хĕрри те курăнмасть. Этемлĕхĕ хăй Пушар çĕклет, хăй синкерне вара хăех чăтса пурăнать. «Пушар» повеç пирки, тĕшĕлесе, пайтах та пайтах лайăххине çырма пулать. Пĕр пытармасăр каласан, телей вăл пирĕн чăваш литературинче В.Рзай пурри. Унăн литературăра хăварнă тĕслĕхлĕ хайлавĕсем çинчен чăнчăн литературăн пахалăхĕсене тĕпе хывса калаçма пулать. Ăста аллине чăмăртама пулать. Ăста çырнисенчен тĕлĕнме, вĕренме пулать.

Паллах, вăхăтне кура – чирĕсем. Виктор Ефремович Рзайăн сипетлĕ пултарулăхĕ пирки хам çырнине тата шанчăклăрах тĕрев пама эпĕ унăн «Çырнисен пуххи» кăларăмĕ валли ятарласа çырнă Виталий Станьял статйинчен илнĕ

тепĕр сыпăка илсе парас тетĕп: «Çыннăн шалти ăс-хакăлĕ – халăхăн иксĕлми хăвачĕ. Çавна Рзай тĕрĕс ăнланса илнĕ. Чун-чĕрепе ăс-хакăл еткерĕ ĕмĕрлĕх, ытти вара – вăхăтлăх кăна! Ĕçре, йăлара, кўрешўре ĕмĕрлĕх хаксене тупасси, тĕллевлĕн талпăнса ырă йĕр хăварас тени çĕклет эteme. Тĕлли-паллисĕр тапаçланса-айкашса, çăткăнланса-тискерленсе ухмах мар çынсене часах йăлăхтарать. Çавăнпа Рзай сăнарĕсем – канăçсăр çынсем, шанакан, юратакан, талпăнакан çынсем. Çынлăхлă вĕсем. Рзайăн юратнă геройĕсем çĕнĕ пурнăçшăн, тĕрĕслĕхшĕн, юратушăн кĕрешекен яш-кĕрĕм, пĕрлешўллĕ ĕçе туртăнакан хресченсем, урлă-пирлĕ пайтах пуç ватнă ватăсем, ача-пăча, хунав çамрăксем, хĕрарăмсем, çар çыннисем. Ытларах – чăваш ялĕн ĕçченĕсем. (...) В.Рзай политикăна, идеологие, общество юхăмне асăрхаман текенсем пур – апла калани тĕрĕс мар. Самана тĕшшине такам каланипе ширанă-им вăл? Çил, хапха, кĕпер, чан, çулăм, шыв юхăмĕ, çутă пайăркисем, йывăç-турат е «сĕлĕхлĕ анчăк», кайăккĕшĕк сăнарĕсем В.Рзай калавĕсенче йĕркерен тухса пыраççĕ. Вĕсем – самана паллисем, эмблемисем, çырав-çăн пурнăçран тухакан сăнарĕсем».

Çыравçă сăн-сăпачĕ туллинрех пултăр тесе çакна та каласа хăварар. Тăлмачăсене А.С.Пушкин сăмахлăх «ямшăкĕ» тенĕрен В.Рзая та халăхсен хушшинчи «ямшăках» тесе калас килет. Тутарла лайăх пĕлнĕрен, вăл чăваш писателĕсен произведенийĕсене тутарла куçарма хутшăннă, хăй хайлавĕсене тутарла та пичетлекеленĕ, вырăсла çырнă, çармăсла юратса вуланă. Çармăс писателĕн М.Шкетанăн «Эренгер» романне чăвашла куçарать, пичетлет. С.Элгерĕн «Шурăмпуç килсен» романне вара вырăсла куçарать. Подстрочниксем (йĕркепĕрсем) тăвать. Ку тĕлĕшпе вăл К.Чулкаçпа А.Артемьев произведенийĕсене вырăс тăлмачисем валли йĕркелесе пани те паллă. Паллах, ырă пурнăçран тертленмен вăл çак хура ĕçпе, хăйĕн хайлас кăмăлĕнчен пистернĕрен, çыравçă ку ĕçре кулленхи çăкăрлăхшăн тарлать. Куçару ĕçне те вăл ятне ямасăр, хăйне пўрнĕ пултарулăхпа туса пырать. Çапла ĕнтĕ, талант талантах – пур ĕç те уншăн вăйтанçи.

Пурнăçĕ лайăх пынă вăхăтра В.Е.Рзай пĕр вăхăт Чăваш çыруçисен пĕрлĕхĕн правленийĕнче те ĕçлет. Çав çулсенче вăл тĕлпулусене, тавлашусене, каççене хутшăнкалать, докладсем тăвать, çĕнĕ произведенисем çырать, çыравçăн тулли пурнăçĕпе пурăнать. Каларăмăр, телее тата ăна 1934-мĕш çулта СССР Писателĕсен союзĕн членне илеççĕ. Тепĕр çулталăкранах В.Рзая каварлăн ура хураççĕ, тĕрекленсе çитеймен çуначĕсене касаççĕ. Хусанти пединститутра вĕренсе пĕлў пухнăскер, çав синкерлĕ кунсем хыççăн вăл каллех Хусана тухса каять, Тутарстанри шкулсенче вырăс чĕлхипе литератури вĕрентме тытăнать. 1944-мĕш çулта Канаша куçса килет, «Чăваш комунни» хаçатăн ялсем тăрăх çўрекен ятарлă корреспонденчĕ пулса тăрать. Унччен маларах вăл çемьеленет, Чистай хулинчи медицина училищинче вĕрентнĕ чухне хăйĕнчен 12 çул кĕçĕнрех вĕренекенпе паллашать те унпа юратса йăва çавăрать. Арăмĕпе, Елизавета Петровнăпа, чăннипех те кил-йыш телейне, ăшшине тупать арçын. «Хурашур курнă Виктор вĕрентўçĕпе 12 çул кĕçĕн Лисук-вĕренекен хушшинче асамлă юрату çуралнă. Ĕмĕрлĕхе. Кун-çул тăршшилĕх. Часах вĕсем пĕрлешнĕ. Вара пĕтĕм ырлăх-шырлăх витĕр пĕрле утнă, пĕрле чăтнă, пĕрне-пĕри нихçан та ўпкелесе курман. Сайра телей!» – тет В.Станьял кĕнекери ум статьяра.

Елизавета Петровна медсестрара, сывлăх хуралĕнче ĕçленĕ, икĕ тату чуна савăнмалăх хĕрпе ывăл çитĕнтернĕ вĕсем. Хĕрĕ – Офелия, врач-терапевт, ывăлĕ – Виктор, инженер.

Пурăннă чухне телейĕ-хисепĕ тивĕçмен В.Рзая. Нумай нуша, нумай терт курать вăл пурăнан пурнăçра, çаплах ватăлать – этем пурнăçĕ виç ĕмĕр мар. Ватăлсан вăл Шупашкара, Атăл леш енче ĕçлекен хĕрĕ патне Сосновкăна

куçать, кунтах 1966-мĕш çулта пенсие тухать. Сывлăхĕ хавшанă пулсан та, хăй çырнисене пĕр çĕре пухма, кĕнекелесе кăларма ĕмĕтленсе ĕçлеме тытăнать. Çĕнĕрен литература ĕçĕпе хавхаланма пуçлать. Япăхнă сывлăхĕ нумаях ĕмĕтлентермест çав ăна, Виктор Ефимович Рзай, çĕнĕрен каллех союз членĕ пулса тăнă хыççăн, ятсăр ятлă писатель, 1970-мĕш çулхи нарăсăн 27-мĕшĕнче вилсе выртать. Таса чун-чĕрепе çĕре кĕрет. Хăй çаврине пурăнса ирттерет чăтăмлă чăваш. Маттур чăваш. «Тĕнче аслă, унта кашнин валлиех кĕнчеле пур. Рзай ĕçпе кăна тăранса пурăнма пултарнă. Вăл хăй ĕмĕрĕнчеултавпа суя, çăткăнлăхпа сĕмсĕрлĕх паллине кăтартма хăюлăх çитереймен. Мĕн тăвăн, çавăн пек хапăл. Сахал ун пек çынсем, питех сахал. Анчах пур. Чăвашра – ытларах та», – хурланса та ăмсанса пĕтĕмлетет пухăннă хăйĕн шухăшне унăн çамрăк ĕçтешĕ В.Станьял. Тав ăна тата çак пуянлăха вулакан патне çитерме пулăшнă юлташĕсене – В.Г.Харитоновăна, Г.Ф.Юмарта, Ю.В. Яковлева, А.Н.Тимукова. Çĕре çити тав!

«Çырнисен пуххине» кĕртнĕ материалсенчен В.Рзай Чăваш Писателĕсен союзĕн правленийĕн вăл вăхăтри председателĕпе А.Ф.Талвирпе юлташла çыхăну тытни лайăх палăрать. В.Рзай ун патне янă çырусенчен Виктор Ефремовичăн шухăш-кăмăлне тарăнраххăн пĕлме май парать. Тĕртсе яманнине, унран йĕрĕнсе иртменнине калать. Ку çырусем – тĕрĕслĕх саманчĕсем. Виктор Рзайăн кĕнекере пултарулăх ыйтăвĕсемпе çапăннă статйисем питĕ пархатарлă тата. Вĕсенчен хăшпĕр килĕшнĕ вырăнсене кăна илсе парам. Акă вĕсем: «Пирĕн маçтăрлăх пĕчĕкçĕ... Мĕн вăл маçтăрлăх?.. Хăшĕсем пирĕн хушăра форма енчен яка, çыпăçуллă сăвă е урăх япала вулаççĕ те калаççĕ вара: вот кăна маçтăр çырнă. Ку поэт – маçтăр теççĕ. Тĕрĕссипе каласан ку пĕрре те тĕрĕс мар, ку ыйтăва çиелтен ăнланнине анчах пĕлтерет. Форма енчен яка, çыпăçуллă сăвă çырма пĕрре те маçтăр пулма кирĕ мар, ăна формальнăй поэтикăна лайăх чăмланă поэт çеç тума пултарать. Маçтăрлăхăн никĕсĕ «поэтикăра» мар, вăл – пурнăçа сарлакан, тарăннăн пĕлнинче. Маçтăр вăл пурнăçăн пĕр мĕнле те пулса енне çеç мар, вăл пурнăçăн хуть кирек мĕнле енне те хăйĕнчен тĕртсе ямасть...

Пирĕн хушăра хăшĕсем вырăс классикĕсенчен те, вырăссен хальхи совет литературинчен те пире нумай вĕренме кирлине «наци форми», наци форми çук, наци форми çухалать, тесе «наци форми» тенине национализмла ăнланса тĕртсе яма пăхаççĕ. Кăна та пирĕн вăйлăн сирсе ямалла. Пирĕн поэтсемпе писательсен ăс-пуçĕ, шухăшĕсем, пĕлĕвĕсем, тӳрех калас пулать, халĕ те-ха нацин хĕсĕк картинчен тухса çитеймен. Пирĕн произведенисем нумайăш шывак пулни, çиелтен çырăнни, вĕсем час-часах çителĕклĕ ĕнентерӳсĕр пулнин сăлтавĕсенчен пĕри, ман шутпа, çакăнта ĕнтĕ...»

Критиксен задачисене те ăнланать В.Рзай: «...критика задачи тухса тăрать: схемăпа, аршăнпа аршăнласа мар пымалла художествăллă произведени патне, ун патне, чи малтан, художник хăйĕн произведенинче панă пурнăçа анализласа пымалла. Мĕн таран тĕрĕс кăтартать художник пурнăçа, мĕн таран тĕрĕс мар? Унтан тин йăнăшсемпе çитменлĕхсен сăлтавĕсене шыра: мировоззренинче-и унăн сăлтавĕсем, автор художествăллă формăна начар çавăрса илнинче-и е талантлăх сахаллинче, е унта та, кунта та т.ыт. – çапла критикăпа анчах эпир писателе пулăшма пултаратпăр. Произведенири пĕтĕм çитменлĕхсене, пĕтĕм йăнăшсене мировоззрени çине çеç йăвантаракан критика вăл – çăмăлттай, вульгаризаторла критика: сиенсĕр пуçне вăл критика нимĕнле усă та кӳме пултараймасть».

Е тата: «Искусство сăнарсем урлă шухăшлать... Искусство пурнăçа сăнлăхсем, уйрăм çынсен сăнлăхĕсем урлă кăтартать, тĕпчет. Сăнлăхсене,

«типлӑ сӑнлӑхсене типлӑ обстоятельствӑсемпе событисенче илсе кӑтартать».

Типлӑ событисенчи типлӑ сӑнлӑхсем тени вӑл нимӗн чухлӗ те уйрӑм ҫынсен сӑнӗсене, вӗсен индивидуально пӗр-пӗринчен уйрӑлса тӑнине пӗлтермест; ҫавӑн пекех класлӑх тени те, вӑл писательсене ҫырансем ҫеҫ сӑрласа пыма чӗнмест, вӑл – пурнӑҫа пӗтӗмӗшпе илсе ҫав хушӑрах унӑн индивидуаллӑ чӗрӗлӗхне чӗррӗн кӑтартса пама чӗнет.

Унсӑрӑн искусство ҫук».

Пӗрре, такӑнтарма, «кулак чанне ҫапакан» ята ҫыпӑҫтарса янӑскерӗн мӗн ӗмӗрӗ тӑршшипех ҫав ярлӑка хӑпӑтса пӑрахма тертленмелле пулса тухать. А.Талвир патне ҫырнӑ ҫырӑвӗнче тӗрӗслӗхе тавӑрса пама йӑлӑнать пурӑнса ӗшеннӗ этем: «С того времени, как я так бесстыдно был оклеветан, поплеван, люди наши выросли и теоретически, и практически, и потому, казалось бы, освобождение моего творчества от клеветнической оценки особых напряжений не требует, но тем те менее я и мое творчество не освобожены от нее. Чья это задача, чей это гражданский долг, если не литературных деятелей и прежде всего нашей писательской организации?

Предлагать мне писать, оставив в силе клеветническую оценку моего прежнего творчества – это все равно, что понукать на взлет птицу после того, как ей связали крылья. Я не начинаю, а продолжаю, я опираюсь и должен опираться на то, что мною уже сделано. Сделанное мною – это мои крылья, мои мускулы, пусть не очень мощные, но нельзя и безполезно, и нелепо предлагать мне взлететь со скованными силами и возможностями. Неужели не ясно? Я думаю, это очень ясно, но иные этого не хотят понять...»

Пурнӑҫ тенӗ япала пуриншӗн те пур пулсан, мӗншӗн вара вӑл В.Рзайшӑн раснах пулмалла пулман. Этем ӗретлӗ пурнӑҫ? Ӗҫлесе илнӗ ҫӑкӑра та пулин усал сӑмахсӑр ҫисе пурӑнмалли пурӑнӑҫ? Хайӗн оппоненчӗ пек, ӑна та тӗрӗсмарлӑх инкекӗ килсе хупласан, хӳтлӗх шырама Мускавсем тӑрӑх ҫӳремест вӑл, хайне хур кӳнӗ Чӑвашрах чӑтса пурӑнать, чӑваш йӳҫҫине чӑвашрах «тутлантарса» пурӑнать. Пурнӑҫ Пушарӗ ӑна хытӑ ӗнтелет, ҫунтарать, юратнӑ ӗҫсӗр – ҫыраслӑх савӑнӑҫӗсӗр – тӑратса хӑварать. Ҫапах та ыранхи кунӗсӗр мар. Чӑваш литературин шӑпчӑкӗ ун тӗлне ир вӑранса ир сӳнет. Анчах та унӑн «какайран тунӑ чӗри тутӑр пек ҫурӑлнӑ, тутӑр пек татӑкланнӑ» пулин те, ун витӗр хӗмленсе тухнӑ хайлавсем чӑваш халӑхӗ валли яланлӑх. Ӗненӳпе хавхаланать чӗрем: халӑхӑмӑра чун ылтӑнне парнеленӗ ҫыравҫӑ – вилӗмсӗр. Ку Виктор Рзайӑн ыранхи кунӗ.

Р.Г.Ахметьянов тӗпчевҫӗн Рзай сӑмаха ҫапла ӑнлантарса пани пур: «Есть основания пологать, что булгары или кыпчаки принесли в Восточную Европу буддийские культы, о чем говорят, в частности, такие слова, как чув. ӐРСАЙ «святой», башк. диал. ЫРЖА «благочестие» – др.-тюрк. АРЗИ, ИРЗИ – санскр. РЗИ «мудрец, святой»... Пӗр-пӗрне ура хурса пурӑнма юратакан халӑхӑмӑра, чӑваш халӑхне, Рзай пек чӑтӑмлӑ, кӗлленсе пӗтмен, сутӑнман, чӑн-чӑн ӑста ятне ҫӳлте тытса пурӑнма пӗлнӗ ҫынсем кирлӗ. Тӗслӗхлӗ ҫынсем. Рзай – чӑваш халӑхӗн ҫветтуйӗ. Пирӗншӗн, чӑвашсен сапаланчӑк ҫыравҫисемшӗн, пушшех те. Тепӗр хут тав унӑн «Ҫырнисен пуххине» пирӗн тӗле ҫитерме пулӑшакансене. Чӑваш ӑсчахӗсене. Виктор Рзай Сӑмахӗ ҫӗнӗ ҫаврана, вилӗмсӗр тӗшше ларчӗ.